К.В. Иванов çинчен тăван шăллĕ Петр Васильевич аса илни / Н. Данилов çырса илнĕ // Чăваш коммунĕ. – 1940. – 18 юпа.

# К. В. Иванов çинчен тăван шăллĕ Петр Васильевич аса илни

...манран 11 çул аслă пулнă. ...çавăнпа унăн пĕчĕккĕ чухнехи ...ниепле те астума пултарайн. Пуриччен ытла вăл Чĕмпĕр... тавранса килте пурăннă вăхăтсе... ...ӳкерчĕк — чирлесе тавранчине...

...май калассан, пичче мана ыт... ...тăвансенчен ытларах юрататчĕ. ...чухне эпĕ питĕ здоровăйччĕ. ...вара вăл ман çинчен аннене:

— Ну, пирĕн Петтюк таса та анне,— ...

...пурăннă чухне пичче пурин... ...ытла тĕрлĕ ĕçпе кĕрмешсе ирт... Вăл килте икĕ шкап, сĕтел ...ытти япаласем те тунине астă... Йывăçранах вăл печатнăй ста... ...тытăннăччĕ. Буквисене те ...йывăçранах питĕ лайăх касса тунăч... ...ахаль çунаранах çилпе çӳ... ...çуна тăвасшăн тăрăшрĕ. Про... ...тăвас тесе веялка ӳкерсем ...хатланатчĕ.

...çурт планне те вăлах тунă ...мĕншĕн тесен çурт туса пĕ... ...вăл ту çине хăпарса ларса ...мĕнле тăвассине хăй чертеж ...панăччĕ.

...килте сăвăсем çырнине асту... мастăп. Хăй сăввисене аттене тата хамăр ялти хĕрсен шкулĕнче вĕренекен ачасене вуласа кăтартнине лайăх астăватăп вара.

Пĕрре вăл мана, Праски аппана та та хăйне альбом çине рисовать тунăччĕ.

Чирленĕ хыççăн пиччене Чĕмпĕртен Квинтильян илсе тавранчĕ. Ăна сызатма Шафраново çывăхĕнчи Слак ялĕнчи больницăран пĕр врач çӳретчĕ. Лекарствăсене аптекăри пекех нумай илсе тултарнăччĕ. Анчах пурĕпĕр врач малтанах: вилет, тесе пĕлтерчĕ.

Чирленĕ чухне пичче пĕр çӳхе кăна кĕнеке куçарчĕ. Кĕнеки ятне маннă. Ăна Иван Яковлевич куçарма парса янă пулнă. Кайран вăл кĕнеке чăвашла пичетленсе тухрĕ, кăвак хупăлăччĕ.

Куçарма пичче мана та. Квинтильяна та паратчĕ. Анчах манăн питех тухмастчĕ те, вăл кулатчĕ вара.

Пичче вилнĕ чухне эпĕ Шаровкăри двухклассăй шкулта вĕренеттĕм. Ытах та йывăрланса çитсен, ман пата илме тычĕç. Вăл питĕ начарланса çитнĕччĕ. Шăммисем кăна юлнăччĕ. Ăна Слак-тусĕнчех пытартăмăр. Пытарма халăх питĕ нумай пухăнчĕ.

Н. ДАНИЛОВ çырса илнĕ.